Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

28 (8094) № * Шăмат кун, 2013 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕçĕ çăмăл мар, ответлăхĕ пысăк

***Çак сăмахсемпе хаклама пулать вырăнти хăй тытăмлăх системинче вăй хураканăн паянхи ĕçне-хĕлне. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Тамара Мешкова Муркаш ял тăрăхĕнче 1997 çултанпа тăрăшать. Малтанах кунта вăл секретарьте ĕçлеме тытăннă. Халĕ вара – тĕп эксперт специалисчĕ.***

***– Куллен халăхпа ĕçлеме тивет. Кашнин хăйĕн ыйтăвĕ, хуйхи-суйхи. Çăмăлах мар пулĕ пурин ыйтăвне тивĕçтерессi? – кăсăклантăм эпĕ.***

***– Пĕрремĕш çул мар, хăнăхнă, – пулчĕ хурав.***

***Çапла, ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакан вун-вун çын кĕрсе тухать куллен ял тăрăхĕн администрацине. Кашнинпех вашават, кăмăллă Тамара Алексеевна. Ырăпа кăна асăнаççĕ вĕсем ун пирки.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Апрелĕн 21-мĕшĕ – Вырăнти хăй тытăмлăх кунĕ



## Вырăнти хăй тытăмлăх кунĕ

**Календарьти çĕнĕ уяв кунне РФ Президенчĕн Указĕпе 2012 çулхи июнь уйăхĕнче çирĕплетнĕ. Çакă вăл вырăнти хăй тытăмлăх институчĕн пĕлтерĕшĕпе вырăнне ӳстерессипе, демократипе граждан обществине аталантарассипе çыхăннă. Раççей муниципалитет пĕрлешӳĕсем ăна çуллен апрелĕн 21-мĕшĕнче паллă тăвĕç.**

**Уяв кунне ăнсăртран палăртман. Шăп çак кун 1785 çулта иккĕмĕш Кĕтерне императрица «Хуласен шалу грамотине» («Грамота на права и выгоды городам Российской империи») çирĕплетнĕ. Шăпах вăл тăрать те ĕнтĕ Раççей вырăнти хăй тытăмлăх законодательствин аталанăвĕн пуçĕнче. Президент указĕн проектне РФ Регионсен аталанăвĕн министерстви муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пысăк пĕрлешӳĕсем – муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пĕтĕм Раççейри конгресĕ, Раççей хулисен союзĕ, Поляр унки леш енчи тата Инçет Çурçĕр хулисен союзĕ, вырăнти хăй тытăмлăхăн пĕтĕм Раççейри канашĕ – сĕннипе хатĕрленĕ.**

## Кун йĕрки ыйтусемпе пуян

Черетсĕр лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2013 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнчи 31 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 26-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче апрелĕн 24-мĕшĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ: «РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн 2013 çулхи 1-мĕш кварталти ĕçĕ-хĕлĕ çинчен», «Районти пĕчĕк тата вăтам предприятисен аталанăвĕ çинчен», «Депутатсен районти Пухăвĕн 2012 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнчи С-23/3 № «Муркаш районĕн 2013 çулхи тата планланă 2014-мĕшпе 2015-мĕш çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен», «Муркаш районĕн муниципаллă пурлăхне приватизаци тăвассин условийĕсем пирки йышăну тăвассин йĕрки çинчен», «Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурлăхпа усă курассин йĕрки пирки положени çирĕплетесси çинчен», «Муркаш районĕн муниципаллă пурлăхне 2013 – 2014 çулсенче приватизаци тăвассин прогноз планĕ (программи) çинчен», «Муркаш районĕн муниципаллă ятарлă пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн çурт-йĕрне уйăрса памалли йĕркен положенине çирĕплетесси çинчен», «Муркаш районĕн харпăрлăхĕнче шутланакан çĕр участокĕсене тата Муркаш районĕн территорийĕнчи патшалăх харпăрлăхĕнче шутланман çĕр участокĕсене арендăна памалли йĕркене çирĕплетесси çинчен», «Муркаш районĕн территорийĕнче обязательнăй майпа тивĕçтермелли муниципаллă услугăсен переченне çирĕплетесси çинчен», «Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурлăха тӳлевсĕр майпа Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн харпăрлăхне парасси çинчен», «Депутатсен районти Пухăвĕн 2012 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи С-24/1 № «Муркаш районĕн пуçлăхĕн должноçне, Муркаш районĕн муниципаллă должноçне йышăнакан çынна протокол мероприятийĕнче, служба командировкинче тата официаллă ытти мероприятире илнĕ парнене памалли (укçан памалли) йĕркене çирĕплетесси çинчен», «Административлă комисси çинчен», «Наградăлама тăратасси çинчен».

**Хамăр инф.**

## Кадастр хакĕпе кăсăкланăр

Çурт-йĕр ыйтăвĕ

Росреестрăн Чăваш Енри Управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх 2015 çулта республикăра пурăнакан чылай çын кӳçман пурлăхăшăн (2014 çулшăн) тӳлемелли налук квитанцине алла илме пуçлать. Чăваш Республикинче 2012 çулта капиталлă строительство объекчĕсен кадастр хакне çирĕплетнĕ, налук калăпăшне вара çавăнпа килĕшӳллĕн шутлаççĕ.

Налук шайне инвентаризаци хакĕнчен мар, кадастр хакĕнчен палăртаççĕ. Росреестрăн Чăваш Енри Управленийĕ хăвăр хваттерĕн, çурт-йĕрĕн е производство пӳлĕмĕн кадастр хакĕпе кăсăкланма ыйтать. Çакă çитес вăхăтра налук тӳлессине тĕрĕс йĕркелеме май парать.

Сирĕн хваттере мĕн чухлĕ тенкĕлĕх хакланине вара Росреестрăн сайтĕнчи кадастр карттинче пĕлме пулать е ун пирки Кадастр палатинчен ыйтмалла. Ку информацисем тӳлевсĕр. Енчен те эсир хваттер лаптăкне палăртнинче хăш-пĕр тĕрĕсмарлăх асăрхатăр пулсан, çак шайлашăва Росреестр комиссийĕнче июлĕн 17-мĕшĕччен пăхса тухаççĕ. Енчен те унччен ĕлкĕреймерĕр пулсан арбитраж судне каймалла пулать. Тĕплĕнрех 8 (8352) 31-71-49 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**М. ИВАНОВА,**
**Росреестрăн ЧР Управленийĕн ертӳçин пулăшуçи.**

Çур аки – 2013

## Вăхăт инçе мар

Хуçалăхсенче çурхи уй-хир ĕçĕсем массăллăн пуçăниччен вăхăт нумаях юлмасть. Çак кунсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче акмалли-лартмалли вăрлăх хатĕрлес, минераллă удобренисемпе çунтармалли-сĕрмелли материалсем янтăлас ĕçсем анлă сарăлнă.

Районĕпе çурхи тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсен элита тата пĕрремĕш репродукци вăрлăхне 434,9 тонна кӳрсе килнĕ. Ку енĕпе «Герой» хуçалăх пуçарулăх кăтартать. Хуçалăх çурхи тулăн элита вăрлăхне 94,9 тонна туяннă.

Минераллă удобренисем 271,9 тонна хатĕрленĕ.

Çурхи уй-хир ĕçĕсене ирттерме 442 тонна дизель топливи, 133 тонна бензин кирлĕ. Хальлĕхе вĕсем хуçалăхсенче кирлин 52 тата 32,3 процентĕ чухлĕ кăна-ха.

Хуçалăхсенче çур улми вăрлăхне суйласа яровизацилеме хурас ĕçсем анлă сарăлнă. Çак вăхăта янтă вăрлăх 802 тонна (27 процент).

Асăрхаттару

## Вĕрентӳ тревоги пулать

Чăваш Енре халăха пĕлтермелли централизациленĕ регион системине тĕрĕслес тĕллевпе ытлари кун, апрелĕн 23-мĕшĕнче, черетлĕ тревога пулать. «Пурте тимлĕ пулăр!» сигнал 9.00 сехетре янăрать.

Гражданла оборона тренировки пуçланнине урамсенче вырнаçтарнă сиренăсемпе громкоговорительсем, радиопа телевидени каналĕсем пĕлтерĕç.

Аса илтеретпĕр, çак сигнал гражданла оборонăн асăрхаттару сигналĕ пулса тăрать. Сигнала халăха авари, катастрофа, çут çанталăкри инкексем пирки, тăшман тапăнса килнине пĕлтермелле чух параççĕ.

Сирена е асăрхаттарăвăн ытти майлă сассине илтсен васкавлă хыпара пĕлме граждансен радиоприемник, телевизор ямалла. Хыпара ертӳçĕсене е ĕçтешсене, çемье членĕсене, кӳршĕсене пĕлтермелле. Сĕнӳсем илнĕ май çак лару-тăрура ачасене, ватă çынсене, чирлисене тата хĕрарăмсене пулăшмалла.

Н. Никольский çуралнăранпа – 135 çул

## Уяв анлă иртмелле

Чăвашсен пĕрремĕш ăсчахĕ, чăвашсен пĕрремĕш хаçатне пуçарса янă Н. Никольский профессор çуралнăранпа кăçал 135 çул çитет. Паллă тĕпчевçĕне, этнографа, историка – пирĕн сумлă ентеше халалласа районта уяв мероприятийĕсем чылай палăртса хунă. Вĕсене хатĕрлесе ирттерессипе район администрацийĕн йышăнăвĕпе йĕркелӳ комитетне çирĕплетнĕ. Унăн пĕрремĕш ларăвĕ кĕçнерни кун иртрĕ.

Комитет членĕсем чи пĕлтерĕшлĕ мероприятисем майăн 17-мĕшĕнче пулмаллине палăртрĕç. Никольский ячĕллĕ паркра çак кун халăх ăстаçисен «Кун-çул эрешĕсем» ятпа курав ĕçлемелле, кунтах «Айтăр ваййа тухар-и?» ятпа чăвашсен уявĕ иртет. Регион шайĕнчи наукăпа практика конференцине хутшăнакансем те çак кун Никольскийăн тăван кĕтесне пухăнаççĕ. Çавăнпа та район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Н. Никольский ячĕллĕ парка тирпей-илем кĕртес ыйтăва та, асăннă мероприятисене çӳллĕ шайра ирттересси те кусран вĕçертмелле маррине палăртса каларĕ.

Çак кунччен те, ун хысçăн та районти Культура учрежденийĕсенче, вĕренӳ учрежденийĕсенче ачасемпе çамрăксен, аслă ӳсĕмри çынсен тавра курăмне анлăлатма май паракан чылай мероприяти ирттерме пăхса хунă. Уява халалланă мерпроиятисем шутĕнче спорт ăмăртăвĕсем те пур, вĕсем шутĕнче «Хыпар» хаçат кубокĕпе парнисемшĕн иртекен çăмăл атлетика кросĕ те.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă çыннăмăр – Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Шетмĕпуç ялĕнче пурăнакан **Фекла Кузьминична СОЛОВЬЕВА** паян 80 çул тултарать. Сумлă юбилей ячĕпе аннене, асаннене, хунямана, кукамая чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв юххи пек вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Утас çулăр такăр пултăр, Турри вăй-хал парса тăтăр. Пире, ачусене, тĕрĕс ăстăн парса ӳстернĕшĕн, пулăшса пынăшăн, ырă чуншăн, ылтăн аллусемшĕн тавтапуç сана, аннеçĕм. Эпир сана пурте питĕ хытă юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Эсĕ пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтитăхлачисем, кӳршисем, тăван-хурăнташĕсем.**



Хаклăран та хаклă мăшăра, çĕр çинчи чи юратнă аннене, кукамая, хунямана, хисеплĕ тăхлача, ырă кăмăллă тăванăмăра – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Тамара Алексеевна ЕВСТАФЬЕВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çак çуркуннехи хĕвел çути пек яланах çутатса тăрсам пирĕн çине. Мăнаçлă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăл-куç пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Пурнăçу телей çырмипе лăпкăн юхтăр. Эсĕ пурри – ниmĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Ачусен, мăнуксен хаваслă сассине итлесе, ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, 2 ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем тата тăванĕсем.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ял çыннисемпе куçа-куçăн

***Пĕрлехи черетлĕ информаци кунĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче иртрĕ. Ку хутĕнче районти предприятисемпе организацисенче пулса вырăнсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулусем йĕркелеме республика тĕп хулинчен Чăваш Республикинчи çынсене ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин çумĕ Мефодий Архипов ертсе пыракан ушкăн килчĕ.***

***Республика представителĕсем çав кун район администрацийĕн тата федераллă структурăсен районти представительствисен ответлă ĕçченĕсемпе пĕрле Муркашпа Мăн Сĕнтĕр тата Чуманкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи ĕç коллективĕсенче пулса курчĕç, çынсемпе тĕл пулчĕç, вĕсене паян канăç паман ыйтусем çине хуравларĕç. Çавăн пекех информаци ушкăнĕн членĕсем район администрацийĕнче çынсене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе йышăнассине йĕркелерĕç.***

***Тĕл пулусенче экологи субботникĕсем йĕркелесси, Йывăç кунне иртересси, ялсемпе çулсене тата çул хĕррисене, масарсене тасатса тирпейлесси, республикăра 2013 çулта тата 2020 çулчченхи тапхăрта пĕтĕмĕшле вĕренӳ системине модернизацилессин комплекслĕ ĕçĕсем, эрех ĕçнипе кĕрешесси пирки сăмах пычĕ.***

# Эрех ырă патне илсе пымасть

**Чăваш Республикинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин çумĕ М. Архипов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи И. Дмитриева чи малтанах «Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулчĕç, унта ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕç.**

Тĕл пулура район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев район пурнăçĕпе паллаштарнă май çӳлерех асăннă ыйтусемпе районта мĕнле лару-тăру пулни çинче те тĕплĕн чарăнчĕ.

Паян юр хăвăрт ирĕлнине пула çӳп-çап куç умне тухма пуçларĕ. Хĕвел хытă хĕртнипе çĕр те часах типет. Çавăнпа та ялсене тирпей-илем кĕртес ыйтупа ĕçлеме шăпах вăхăт. Ростислав Николаевич ку ыйтăва шăмат кун иртекен ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕнче те сӳтсе явассине палăртрĕ. Майăн 1-мĕшĕччен пур çĕрте те тирпей-илем ĕçĕсене туса ирттермеллине палăртрĕ.

Вĕренӳ системине модернизацилессине илсен, çакна палăртмалла. Районта пĕлтĕр ку енĕпе сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Кăçал вара асăннă программăпа килĕшӳллĕн 4 шкула (Мăн Сĕнтĕр, Сосновка, Йӳçкасси, Нискасси) тĕплĕ юсамалла. Тата Шурча шкулне ял тăрăхĕсен территорийĕсенче комплекслă компактлă строительство ĕçĕсем пурнăçламалли программăпа килĕшӳллĕн тĕплĕн юсама палăртаççĕ. Çакна валли республикăран пурĕ 5 млн. та 393 пин тенкĕ уйăраççĕ. Район бюджетĕнчен тата 1 млн. та 400 пин тенкĕ патне укçа пăхса хăварнă çакна валли.

Иртнĕ çул Муркаш шкулĕн столовăйне тĕплĕн юсаса çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă пулсан, кăçал çак ĕçе малтан тепĕр 3 шкулта туса ирттерме палăртнăччĕ. Республика 6 шкулта çак ĕçе туса ирттерме пулăшма шантарнăран вара списока пысăклатас енĕпе шухăшлаççĕ районта. Республикăран уйăракан укçа-тенкĕ çумне районта тата тепĕр 5 млн. тенкĕне яхăн укçа тупма тивет.

Халĕ вара чуна ыраттаракан ыйту патне куçар. Юлашки вăхăтра эрехпе ытларах иртĕхме пуçларĕç çынсем. «Мĕн пур инкек, хуйхă-суйхă эрехпе иртĕхнинчен пуçланать», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ. Кăçалхи висĕ уйăхра, акă, йăлари харкашусен йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Упăшки арăмне хĕненĕ, кӳршĕ тепĕр кӳрше патак çитернĕ. Е тата больницăна ытларахăшĕ эрехпе иртĕхнине пулах лекет: спирт пур шĕвекпе наркăмăшланаççĕ, нумай вăхăт ĕçнине пула малтанхи чирсем «пуçĕсене çĕклеме» пуçлаççĕ. Çул çинче те ӳсĕр водительсене, пассажирсене пула инкексем пулсах тăраççĕ. Мĕн патне пыратпăр капла?

Е тата «фанфуриксем» патне таврăнар. Район администрацийĕ республикăна сĕнӳпе тухнă хыççăн почтальонсем ăна килĕрен киле çӳресе сутма пăрахрĕç: усси пулчĕ. Анчах та ку ыйту Раççей шайĕнче нормативлă право акчĕсем йышăнмасăр пĕтĕмпех татăлса пĕтмест.

Халь тата тепĕр çакнашкал пулăм куç умне тухать. Райпо магазинĕсенче йӳнĕ одеколонсене ещĕкĕ-ещĕкĕпех сутма пуçларĕç. Паллах, ăна сутма никам та чармасть. Анчах та ĕçекен çынсем ăна 5–6 кĕленчене харăс сапăнма мар, ĕçме илнине сутуçăсем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та укçа тăвас ыйтăва кăшт хыçарах хăварса çынсем çинчен шухăшласан, тен, урăх таварсем ытларах сутса услам туни вырăнлăрах мар-ши? Çак шухăша палăртсах каларĕ Ростислав Николаевич.

Е тата аякка ĕçлеме каякансене илер. Пĕр енчен вĕсем бюджета пĕр тенкĕ налук та тӳлемеççĕ. Тепĕр енчен вĕсен социаллă хӳтлĕх çук: аманса таврăнаççĕ, вилсе килекен тĕслĕхсем те пулмарĕç мар районта. Пенсие тухма вăхăт çитсен, Чăваш Республикинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин çумĕ М. Архипов каланă пек, вĕсем хăйсем те çакна туйса илеççĕ. Мефодий Михайлович пирĕн районта пурăнакансен 10 проценчĕ аякка кайса ĕçленине палăртрĕ. Ытти районсенче ку кăтарту 20–30 процентпах танлашать. Анчах ют çĕрте те эрех ĕçекенсем кирлĕ мар.

Эрехпе иртĕхни пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха та вирлĕн пырса çапать. «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн директорĕ Н. Любимов каланă тăрăх, коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлейменнисем – эрехпе иртĕхекен çемьесем.

М. Архипов пĕрлехи информаци кунĕн 2-мĕш ыйтăвĕ çинче чарăннă май кăçалтан пуçласа шкулсенче физика тата математика класĕсем уçмаллине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен паян техника тĕлĕшĕнчи специалистсем çитмеççĕ: инженерсем сахал, сварщиксем тата ытти çакнашкал профессии çыннисем çителĕксĕр. Çав вăхăтрах вара ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче учета илнĕ экономистсемпе бухгалтерсем, юристсем ытлашшипех.

Тирпей-илем кĕртес ыйтупа Мефодий Михайлович çакна палăртрĕ: йывăçсене лартса хăварни кăна çителĕксĕр, вĕсене сыхласа хăвармалла.

Пĕрлехи информаци кунĕнче сӳтсе явма кĕртнĕ ыйтусемпе Муркашри кирпĕч заводĕнче те уçă калаçу пулчĕ. Унăн директорĕ Ю. Петров каланă тăрăх, эрехсăра проблеми кунта çук.

Заводра 150 çын ĕçлет. Уйăхне 1 млн. та 200 пин – 1 млн. та 400 пин штук кирпĕч кăлараççĕ. Çулталăкне 14 млн. та 800 пин кăларма пулать. Кăçал ку плана тултарма тĕллев лартнă. Малтан 4 бригада ĕçленĕ пулсан, халĕ вара 2 сменăри 3 бригада çыннисемех çавăн чухлех ĕç тăваççĕ. Иртнĕ çул завод 10,5 млн. тенкĕ таса тупăш тунă.

Юлашки çулсенче предприятире çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртес, машинăпа трактор паркне çĕнетес ыйтупа ытларах тимленĕ пулсан, халĕ вара рабочисен ĕç условийĕсене лайăхлатассипе нумай ĕç тума палăртнă. Ĕç укçи те предприятире пĕчĕк мар: 14 пин тенкĕрен те иртет. Çулла тата та пысăкрах вăл. Кирпĕче вара Чулхула, Ульяновск облаçĕсенче, Тутарстанра тата ытти хуласемпе республикăсенчен хапăл тусах туянаççĕ. Ку вăл хамăр республикăри предприятисене шута илмесĕр.

Тĕл пулура куллен хумхантаракан ыйтусене те хускатрĕç. Вĕсем çĕнĕ тасатмалли сооружени тăвассипе, шывпа, электричествăпа тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтусем пулчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пур ыйтусем çине те тулли хуравсем пачĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Ытларах хамăртан килет мар-и?

**Чăваш Республикин тĕрĕслевпе шутлав палатин председателĕ Татьяна Минина ертсе пыракан ушкăн Чуманкасси ял тăрăхĕнче пулчĕ. Ушкăн йышĕнче çавăн пекех район пуçлăхĕ – Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев тата район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева.**

Пĕрремĕш тĕл пулу Чуманкасси ял тăрăхĕн администрацийĕнче иртрĕ. Унта ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Белов, вырăнти актив, депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсемпе старостăсем, ял çыннисем хутшăнчĕç. Информаци ушкăнĕ çавăн пекех Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул, «Малыш» ача сачĕн коллективĕсемпе тĕл пулчĕ.

Игорь Васильевич хăйĕн сăмахĕнче кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем çинче чарăнса тăнипе пĕрлех çитсе килекен çурхи уйхир ĕçĕсем пирки те сăмах пуçарчĕ. Çакна ăнланмалла та. Ял çыннишĕн паян унран ответлăрах та пĕлтерĕшлĕрех ĕç çук та темелле. Çурхи кун çулталăк тăрантарать тесе ахальтен каламан чăвашсем авалах.

Пĕтĕмĕшле илсен кĕрхи культурăсем япăх мар хĕл каçнине палăртрĕ Игорь Николаев. Кĕрхи тĕш тырă культурисене иртнĕ çул 4347 гектар çинче акса хăварнă. Вĕсен 90 процентне яхăн сыхланса юлнă. Çурхи ĕçсен калăпăшĕ пĕчĕкех мар. Çурхи тĕш тырă культурисене пĕтĕмпе 11 пин гектара яхăн лаптăк çинче акса хăвармалла, çĕр улми 1000 гектар ытла лартмалла. Ака-суха ĕçĕсене агротехникăпа пăхнă сроксенче, пахалăхлă ирттересси пирки те манма кирлĕ мар. Ку енĕпе вара Чуманкассисен пĕтĕмпех йĕркеллĕ теме çук-ха. Хуçалăхăн аталану çулне вăхăт ыйтакан требованисене тĕпе хурса йĕркелесе пыма тăрăшмалли куçкĕрет.

Республика представителĕ Татьяна Дмитриевна тĕл пулусенче 2013 çулта тата 2020 çулчченхи тапхăрта Чăваш Республикинче пĕтĕмĕшле вĕренӳ системине модернизацилессипе пурнăçламалли комплекслă ĕçсене ытларах тимлĕх уйăрчĕ. Ку тĕлĕшпе пĕлтерĕшлĕ икĕ саманта уйрăммăн палăртрĕ вăл: кусем вĕсем шкулсенче юсав ĕçĕсем туса ирттересси тата учительсене пахалăхлă, тухăçлă, чуна парса ĕçлеме хавхалантарса пырасси.

Кăçал республикăра 115 шкулта юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртнă. Çав тĕллевпе 144,2 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă. Педагогсен ĕç укçи вара çулталăк вĕçленнĕ тĕле республикăри вăтам ĕç укçи шайĕпе танлашмалла.

Модернизаци программипех 2014 çул тĕлне пур шкулсене те спорт оборудованийĕсемпе тивĕçтерсе пĕтерме пăхнă. Шкул мастерскойĕсенче те ачасене ĕçлеме кирлĕ условисем пулмалла. Кунпа пĕрлех çывăх малашлăхрах пуçламăш классенчи ĕç вырăнĕсене автоматизацилессин, электронлă журналсемпе тата электронлă дневниксемпе усă курма тытăнассин, шкултах ачасене техника специальноçĕсене алла илме майсем туса парассин, инженер класĕсем йĕркелессин, шкул столовăйĕсенче апатланассин пахалăхне лайăхлатассин, шкул автобусĕсен паркне çĕнетессин, инвалид ачасене дистанци мелĕпе вĕренме пулăшассин задачисене татса пама тивет. Патшалăх шайĕнчех вĕренӳ тытăмĕ çине юлашки вăхăтра пысăк тимлĕх уйăрни ăнсăртран мар. Малашлăх паянхи çамрăксен аллинче тетпĕр, шăпах вĕсен татса памалла пулать малашне умри задачăсене те.

«Педагогсен, культура ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстермелле теççĕ. Çавна валли укçитенкине ăçтан тупĕç-ха?» Çакăн пек ыйту та пулчĕ тĕл пулусенче. Рената Иосифовна ку тĕлĕшпе çавна палăртрĕ. Учительсене ĕç укçи хушса тӳлеме кăçалхи пĕрремĕш çур çул валли республика бюджетĕнчен 8,5 миллион тенкĕ уйăрнă. Çавăн чухлех иккĕмĕш çур çул валли те уйăрасса шанăç пур. Кăçалхи пĕрремĕш квартал итогĕсемпе пĕтĕмĕшле вĕренӳ системинчи учительсен шалăвĕ районĕпе вăтамран 15,5 пин тенкĕпе танлашнă. Çулталăк тăршшĕпе ĕç укçине кашни квартал пуçламăшĕнчех ӳстерсе пыма пăхнă. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вăл 19 пин тенкĕ ытла пулмалла.

Хушма вĕренӳ системинче тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансен ĕç укçи çак вăхăта вăтамран 12 пин тенкĕ ытла. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле ача сачĕсен воспитателĕсен вăл вăтамран 16 пин тенкĕ, хушма вĕренӳ системин ĕçченĕсен 14,4 пин тенкĕ пулмалла. Культура ĕçченĕсен уйăхри вăтам ĕç укçи 11 пин тенкĕрен кая пулмалла мар. Анчах та çак задачăна татса пама укça-тенкĕне вырăнти бюджетран уйăрас пулать. Сумми пĕчĕкех мар, 8 миллион тенкĕне яхăн. Çавăнпа та хăш-пĕр капиталлă ĕçсем пурнăçлассине те çĕнĕрен пăхса тухма тивесси вăрттăнлăх мар.

Модернизаци программипе кăçал районти 4 – 5 шкулта юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă. Йӳçкасси, Мăн Сĕнтĕр шкулĕсенче канализаци системисене йĕркене кĕртмелле, чӳречесене улăштармалла. Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче комплекслă компактлă строительство ĕçĕсем пурнăçлама уйăракан укçа-тенкĕпе Ярапайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче Шурча шкулĕпе Культура çуртĕнче юсав ĕçĕсем туса ирттерме палартнă.

2004 – 2006 çулсенче туса кăларнă шкул автобусĕсене çĕннисемпе улăштарас ĕç пырать. Иртнĕ çул района çĕнĕ автобуссем 5 уйăрса панă пулсан, кăçал 3 килмелле.

Чуманкасси шкулĕпе ача садĕнче условисем япăх мар. Пӳлĕмсенче таса, тирпейлĕ, хăтлă. Нумаях пулмасть шкулпа ача сачĕн çийĕсене çĕнĕрен витме май тупнă, пластик çӳречесем лартнă. Халĕ вара вĕсене хутса ăшăтма хăйсен котельнăйĕсене тăвассин ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Мĕншĕн тесен тĕп котельнăйран ăшă илсе тăни питех те хакла кайса ларать. Шкул директорĕ Валерий Васильев шутланă тăрăх хăйсен котельнăй пулсан çулталăкне 400 пин тенкĕне яхăн перекетламе май килĕччĕ. Халĕ вара шкула хутса ăшăтнăшăн çуллен 850 пин тенкĕ ытла тухса каять.

Валерий Михайловича хальхи пек каласан оптимизаци ыйтăвĕ те канăç памасть. Шкулта ĕçлекенсен шалăвне ӳстернĕ май штата самаях чакарма пăхнă. Вĕрентекенсен вара уроксен шучĕ ӳсет. Çавăнпа та вĕренӳ пахалăхĕн ыйтăвĕсем шухăшлаттараççĕ ăна.

Çурхи кунсем çитсе килнĕ май пĕтĕм тасамарлăх çиеле тухать. Çак тапхăрта тавралăха тирпей-илем кĕртессипе, территорисене тасатассипе субботниксем иртересси йăлана кĕнĕ. Çак ĕçсене пуçăнма вăхăт ĕнтĕ. Кун пирки те калаçу пулчĕ тĕл пулусенче. Тасалăхпа тирпейлĕх вара хамăршăнах. Кунта укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен тăккаланас çук. Çӳп-çапа территорисенчен тиесе полигона ăсатассине çывăх вăхăтрах йĕркелеме шантарчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Белов.

Тирпей-илем пирки сăмах пуçарнă май ял çыннисенчен хăшĕсем юрăхсăра тухса пыракан пĕвесене, кĕперсене юсаса майлаштарассин ыйтăвĕсене те хускатрĕç. Анчах та хуравне паракансем те хăйсем хушшинчех тупăнчĕç: «Мĕншĕн сире такам пырса туса памалла? Хăвăр валли вĕт ку пĕтĕмпех. Эпир кун пек ыйтусене никам хушмасăрах, хамăр вăйпа-йышпах татса паратпăр вĕт-ха». Кунта урăх хушса нимех те калаймăн.

Эрех ĕçнипе кĕрешесси – кулленхи ыйту. Ку проблема Чуманкассисен те çук мар. Уйрăмах пахалăхсăр тĕрлĕрен спирт шĕвекĕсем, сăмакун сутакансемпе кĕрешĕве вăйлатмалла. Çын сывлăхĕ çинче укçа туни чыссăр япала. Ку çула пӳлессинче вара пур майсемпе те усă курас пулать. Кун пек çынсене халăх умĕнче намăслантарни те, административлă айăплав мелĕпе усă курни те, ăнлантару ĕçне лайăхрах йĕркелени те кирлех. Чи пĕлтерĕшли вара – эрехпе кĕрешесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăмалла. Уйрăмах çамрăксене эрех серепине çакланасран сыхласа хăварас пулать.

Ял çыннисем тĕл пулусенче пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене те хускатрĕç. Çапах та вĕсенчен ытларахăшĕ çакăн пек тĕв турĕ: хамăрăн пурнăçа лайăххах тăвас тесен хамăр çине ытларах шанас пулать. Пĕччен сурать – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать тени паянхи куншăн уйрăмах актуаллă.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Экономика тĕрекĕ – паха вăрлăхра

Çур аки



«Кирек епле ĕçĕн те хăйĕн мелĕпе йĕрки пур. Ăна пурнăçлаймарăн – аталану лавне алăран вĕçертрĕн. Çакна чунпа ăнланатпăр, куçпа курса тăратпăр, паян тумалли ĕçе ырана хăвармасăр ĕçлеме тăрăшатпăр. Çакă пĕтĕмĕшле хуçалăх экономикине тĕреклетнине те, апла пулсан хамăрăн пурнăç та ырă еннелле кайнине те, çĕнĕ тĕллевсем çуралнине те куратпăр-ăнланатпăр. Çавăнпах умри тĕллевсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшатпăр. Хамăр ĕçлемесен пире кам килсе туса парĕ, кĕр çитсен кĕлете кам тултарĕ?» – çурхи ака-сухана явапллăха туйса хатĕрленни пирки калаçать «Ударник» ФГУПăн çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен цех пуçлăхĕ Виталий Морозов. Пирĕн паянхи калаçу кăçалхи çур акире лартакан «иккĕмĕш çăкăрăн» пулас тухăçĕ пирки.

Йĕпреçсем кăçал пĕтĕмпе 250 гектара яхăн çĕр улми лартас тĕллевлĕ. Çакна валли вĕсен паха вăрлăхĕ те çителĕклĕ. Унпа пĕрлех «иккĕмĕш çăкăр» вăрлăхне туса илессипе ĕçлекен хуçалăхăн вăл сутлăх та 600 тоннăна яхăн хранилищĕсенче выртать. Ăна суйлассипе паян ятарлă бригада **(сăн ӳкерчĕкре вĕсен пĕр ушкăнĕ)** кулленех ĕçе тухать. Сутлăх сортсем: «Невский», «Жуковский ранний», «Удача», «Любава», «Бриз», «Лилея», «Романо». Вĕсен пĕр килограмм хакĕ сорта кура 10 – 18 тенкĕ. Çĕнĕ те шанчăклă сортсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем те, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе ялта пурăнакансем те туянма пултараççĕ. Ытларах туянакансене кашни тоннишĕн патшалăх 6630 тенкĕ каялла тавăрса парать.

Хуçалăхра çĕр улми вăрлăхне çур аки валли хатĕрленипе кăсăкланнă май çакă куç умне тухрĕ: хальлĕхе сутăннă 130 тонна вăрлăхран пĕр килограмне те хамăр районти хуçалăхсем туянман. Йĕпреçсемпе тачă çыхăнурисем – Марий Эл Республикипе Самара тата Чул хула облаçĕсем, хамăр республикăри Шупашкар районĕ.

Кунта çĕр улми вăрлăхĕ пирки кĕске характеристика парса хăварни вырăнлă пуласса шанатăп. Хуçалăх элитăллă тата оригиналлă вăрлăхсем туса илессипе ĕçленĕ май вĕсем чирчĕртен сывă, нематодăна хирĕç тăма хатĕр.

– Çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен лабораторире эпир 18 сортлă «иккĕмĕш çăкăр» вăрлăхĕпе ĕçлетпĕр. 40 çула яхăн çак енпе вăй хунă май ĕçри опыт та пысăк, ĕçлемелли техника хатĕрĕсем те çĕнĕлле вăй хума пулăшаканнисем. 18 сорт хушшинче хамăр çĕр-шыврисемпе пĕрлех Германири, Голландири, Францири, Беларуçпа Украинăри сортсем те пур. Кашниех ырă малашлăхлă, – терĕ вăрлăх суйлакансем патне утнă май В. Морозов.

Хуçалăх ĕçченĕсем çĕр улми хранилищинче пĕр çын пек ĕçлеççĕ. Л. Сергеева, Ю. Исаева, Е. Гаврилова, Н. Иванов, Л. Алексеев, Г. Николаева, Р. Иванова, З. Иванова, Г. Германов, Г. Алексеева, Л. Григорьев, М. Платонов тата ыттисем те кулленех хăйсене шаннă ĕçре. 18 – 20 çын хĕлĕпех вăй хунă çак ĕçре. Çавăнпа та алă çитмен çĕр улми пĕр кĕтесре çеç юлнăччĕ.

– «Любава» сорт суйлатпăр паян. Хамăр килте те хăшĕн-пĕрин пур çак сорт. Килĕшет вăл пире. Çавăнпа та килти хушма хуçалăх тытакансем те ăна пĕр-икшер михĕ туянсан йăнăш тумĕç, – терĕ ĕçрен уйрăлмасăр Любовь Сергеева ĕçчен.

Хуçалăхăн çывхаракан çур акинче уй-хир ĕçĕсене 1500 гектар çинче ирттермелле. Йĕпреçсем çак ĕç калăпăшне агротехника ыйтакан тапхăрта пурнăçлама паха вăрлăхне те, минераллă удобренине те, сĕрмелли-çунтармалли материалсене те çителĕклĕ янтăланă ĕнтĕ.

... Календарь çинче ака уйăхĕн 20-мĕшĕ. Юр ирĕлсех пĕтмен пулин те çур аки çывăххарах та çывăххарах. Ăна пысăк пахалăхпа ирттерни экономика хăвачĕн тĕрекĕ пулнине çĕр ĕçченĕ лайăх ăнланать.

**А. БЕЛОВ.**

# Хĕр вилине тупнă

Следстви комитетĕнчен 18+

Район территорийĕнче тискер преступлени пулса иртрĕ. Апрелĕн 13-мĕшĕнче вăхăт каç еннелле сулăнсан Шомик ялĕ çывăхĕнчи вăрманта йывăр сурансемлĕ хĕр вилине тупнă. Çакăнта криминаллă сĕм пулни аван курăнать, ку тĕлĕшпе халĕ следстви пырать. Юр ирĕлнĕ май çиеле тухнă çын кам пулнине палăртнă. Вăл Шупашкар хулинче пурăннă 22 çулхи хĕр пулнă.

Преступлени вырăнĕнче нимĕнле йĕр те, паллă та юлманпа пĕрех ĕнтĕ. Çапах та оперативлă ĕçсен кăтартăвĕ тăрăх Шупашкар хулинче пурăннă 22 çулхи хĕре çак хулари 21 çулхи икĕ хĕр тата Вăрмар районĕнчи вĕсен 20 çулхи пĕлĕшĕ вĕлернине çирĕплетнĕ.

Следстви палăртнă тăрăх преступлени вара çапларах пулнă. Февралĕн 6-мĕшĕнче каçхине Шупашкар хулин Новоюжнăй районĕнчи пĕр хваттерте хĕрсем пухăннă, 22 çулхипе харкашу пуçарнă. Вĕсем хушшинчи ĕç-пуç шалтан-шала кĕнĕ. Хăйхискерне ирĕксĕрлесе çарамаслантарнă. Çак ушкăн хăйсем патне таксине автомашинине чĕнсе илнĕ. Ирсĕр шухăш-тĕллев тытнăскерсем хĕл кунĕнче çарамаслантарнă хĕре Шупашкар районĕнчи Хыркассине илсе çитернĕ. Кунта вара ăна автомашинăран кăларса хăрушла хĕненĕ, пĕр шелсĕр пуçĕнчен чылай хут тимĕр кастетпа çапнă. Преступлени йĕрне пытарас тĕллевпе, асăннă ирсĕр ĕçшĕн явап тыттарассинчен хăранипе халсăрланса çитнĕскере каллех автомашинăна лартса çула тухнă. Халĕ вара вĕсем Шомик ялĕ çывăхĕнчи вăрман патне çитнĕ. Кунта вĕççĕр-хĕрсĕр ирсĕр асаплантару малалла тăсăлнă, пуçланă преступление вĕçне çитерес тесе юлашкинчен 22 çулхи хĕре пăвса вĕлернĕ. Хăйсен хăтланăвне виççĕшĕ те аванах ăнланнă, çавна май преступлени йĕрне çухатас тĕллевпе сывлама пăрахнăскере юрпа картланă, хăйсем тарнă.

Çакăнта вара тепĕр ыйту канăç памасть. Виçĕ хĕр хăрушă преступлени тунă, анчах та темиçе сехет хушши çакна такси водителĕ çăмăллăнах сăнаса ларнă вĕт-ха. Вăл вара 22 çулхи хĕр пурнăçне çăлса хăварма пултарнă. Тен пирĕнте çынлăх тухĕ туйăмĕ чăнах та юлман?

**Пичете следстви комитечĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Полици пайĕ асăрхаттарать

# «Вунă минутлăха» та ан хăварăр

Пĕлтĕрхи оперативлă сводкăна тишкерсен республикăра 135 велосипед вăрланине палăртнă. Çак вăрлăла ĕçсенчен çуррине кăна уçса пама пултарнă. Велосипедсене ытларах подъездсенчен – 67, урамра – 26, гаражсенчен – 6, çуртсем умĕнчен – 5, дачăсенчен – 4, граждансен хуçалăхĕсенчен – 3 вăрланă. Кăçалхи январь–март уйăхĕсенче кăна 13 велосипед вăрланине регистрациленĕ, хальлĕхе вĕсенчен 5-шне кăна тупса палăртнă-ха.

Çынсем велосипедсене пĕр шикленмесĕрех подъездсенче, тамбурсенче, ытти вырăнта хăварни «кукăр алăсене» çакăн пек преступленисене тума хистекен фактор пекех пулса тăрать. Çавăнпа та нумай чух хамăрăн тимсĕрлĕхпе çăмăлттайлăх хамăра ура хурать те. Пур вырăна, паллах, видеосăнав оборудованийĕ лартма çук, çавăнпа та «вунă минутлăха» хăварнă велосипед ăçта «ярăнса кайнине» çийĕнчех тупса палăртма та тепĕр чухне май çук.

Юр ирĕлсе пĕтнĕрен çынсем час-часах çула велосипедпа тухаççĕ. Апла пулсан икĕ урапаллă юлташа шикленмелле, хăрушсăрлăх енĕпе нимĕнле те хӳтĕлемен вырăнсенче «вунă минутлăха» та ан хăварăр.

**В. АЛЕКСЕЕВ,**
**районти полици пайĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Сăн ӳкерчĕк айăплать

# Муркашра тапать «çăл куç»



Асăннă «çăл куç» район центрĕнче çул хĕррине сĕт завочĕпе юнашарах вырнаçнă. Çывăхра пурăнакансем каласа панă тăрăх вăл тапма пуçăнни 10 çула та яхăн пулĕ. Сăмах май тимĕр-бетон ункăсемпе пурала唐 тунă «çăл куçсем» кунта пĕрре кăна та мар.

Шел пулин те, таса шыв юхса тухмасть çав ку «çăл куçсенчен». Çывăхри Чапаев урамĕнчи нумай хваттерлĕ 59-мĕш çуртра пурăнакансен таса мар шывĕ çакăнта çиеле тухать пулас. Кайран вара тӳрех çул хĕррипе çырмана çул тытать. Таврана япăх шăрша сарăлать. Унтан та ытларах вара çырмари юхан шыв вараланать. Тимĕр-бетон пусăсем вара юшкăнпа тулса ларнă.

Кăçалхи çула тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк тесе палăртнă. Тавралăха çакăн пек «хӳтĕлени» пире пĕртте чыс тумасть.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Тĕнче шайĕнче палăрчĕç

Бокс




Муркаш енĕн çамрăк боксерĕсем нумаях пулмасть Кстово хулинче иртнĕ тĕнче шайĕнчи ăмăртуран таврăнчĕç. «Лукойл Нижегороднефтеоргсинтез» парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртăва чылай çĕр-шыври спортсмен хутшăннă.

Пирĕн районти боксерсем – С. Черкашин, О. Сютруков тата С. Черкашин (кĕçĕнни) тренер-преподавательсен вĕренекенĕсем çак ăмăртуран черетлĕ çитĕнӳсемпе килчĕç. Александр Никитин, Денис Грачев, Алексей Кудряшов, Николай Пегасов тата Сергей Кудряшов хăсен виçе категорийĕсенче çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă. Стас Кожевников 2-мĕш вырăн йышăннă.

# Çын сăмахне пула е...

Прокуратурăран

Сăмах çерçи мар, вĕçсе тухсан тытаймăн; усал сăмах утпа çӳрет е çын сăмахĕ харкаштарать текен халăх каларăшĕсем чăнлăха килеççĕ пурнăçра. Акă çӳлерех асăннипе çыхăнакан тата саккунпа килĕшсе тăман пĕр тĕслĕхе тишкерер. Çатракасси ял тăрăхĕнчи пĕр ялта пурăнакан арçын эрех ĕçсе ӳсĕрĕлме єлкĕрнĕ ĕнтĕ – кĕтсех тăр, кĕçех асар-писер пуçланĕ.

Вăтăр çултан иртнĕ арçын хайхискер, хăй кам пулнине ĕнентерес шухăш-тĕллевпе-ши, арăмне хĕнеме пуçлать. Этем картĕнчен тухса кайнăскер пĕрре кăна çапнипе çырлахмасть. Çапла вара йывăр чăмăрĕпе ӳсĕр арçын хĕрарăма умлă-хыçлă тӳплеттерет. Çак пӳтсĕре, паллах, çын тесе калама чĕлхе çаврăнмасть. Маларахах хăй ирсĕр ĕçне пуçăннăскер, пӳрте кĕрсен те арăмне хĕнет, унăн пуçне алăк сулли çумне темиçе хутчен тытса çапать. Халсăрланса çитнĕ хĕрарăм çапах та тарма хал çитерет, апла пулин те кăра çиллине чарайман упăшки ăна хăваласа çитсе каллех хĕнет. Çапла вара хĕрарăм кĕлетки сурансемпе тулать, кĕлеткен хăш-пĕр пайĕсем вара хуçăлнă та.

Преступлени тунă çын хăй айăпне туллин йышăнать. Следстви вăхăтĕнче пулни-иртнин сăлтавне арçын çапла ăнлантарать:

– Мускав облаçне ĕçлеме кайнăччĕ. Ывăлăм ман пата шăнкăравларĕ, манăн арăм, унăн амăшĕ ĕнтĕ, урăлмиех эрех ĕçсе пурăнни пирки пĕлтерчĕ. Çапла вара ку ĕçре йĕрке тăвас тĕллевпе тепĕр кунхине тăван киле пуçтарăнтăм. Эпĕ çитнĕ чухне арăм ӳсĕр марччĕ. Çапах та малтанхи кунсенче хăй эрех ĕçсе пурăннине йышăнмарĕ. Çапла вара темиçе кун иртрĕ, туссемпе эрех ĕçме пухăнтăмăр. Черкке хыççăн черкке пушанчĕ, чĕлхе-çăвар çемçелчĕ. Вĕсен арăм пирки мана ырă мар хыпар пĕлтерчĕç, вăл чăнах та эрех кунсеренех ĕçнĕ, арçынсемпе туслашнă тата ытти те. Паллах, кун пек ырă мар калаçу мана картран кăларчĕ. Çапла вара эпĕ çакăн пек хыпар хыççăн киле çитрĕм, малаллахи паллă ĕнтĕ.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Объявления**

## Сообщение о проведении годового общего собрания акционеров Закрытого акционерного общества «Моргаушский кирпичный завод»

**Уважаемый акционер!**

14 мая 2013 года в 10:00 состоится годовое общее собрание акционеров Закрытого акционерного общества «Моргаушский кирпичный завод» (далее – общее собрание акционеров).

Форма проведения общего собрания акционеров: собрание.

Место проведения общего собрания акционеров: в здании администрации ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» по адресу ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Восточная, д. №1.

Время начала регистрации лиц, участвующих в общем собрании акционеров: 09:00.

ПОВЕСТКА ДНЯ ОБЩЕГО СОБРАНИЯ АКЦИОНЕРОВ:

1. Определение порядка ведения годового общего собрания акционеров.
2. Избрание членов счетной комиссии.
3. Утверждение годового отчета, годовой бухгалтерской отчетности, в том числе отчетов о прибылях и убытках (счетов прибылей и убытков) общества, а также распределение прибыли, в том числе выплата (объявление) дивидендов, и убытков общества по результатам финансового года.
4. Избрание членов совета директоров общества.
5. Избрание членов ревизионной комиссии.
6. Утверждение аудитора общества на 2013 год.

В общем собрании могут принять участие лица, включенные в список лиц, имеющих право на участие в общем собрании, составленный по состоянию на 16 апреля 2013 года, а также лица, к которым права указанных лиц на акции перешли в порядке наследования или реорганизации, либо их представители, действующие на основании доверенности на голосование, или на основании закона.

Акционеру необходимо иметь при себе паспорт или иной документ, удостоверяющий личность.

Представитель акционера вправе действовать на основании доверенности, которая должна быть оформлена в соответствии с требованиями пунктов 4 и 5 статьи 185 Гражданского кодекса Российской Федерации и ФЗ «Об акционерных обществах» или удостоверена нотариально и содержит сведения о представляемом и представителе (для физического лица – имя, данные документа, удостоверяющего личность (серия и (или) номер документа, дата и место его выдачи, орган, выдавший документ); для юридического лица – наименование, сведения о месте нахождения).

С информацией (материалами), подлежащей предоставлению лицам, имеющим право на участие в общем собрании акционеров, при подготовке к проведению общего собрания акционеров общества можно ознакомиться в течение 20 дней до даты проведения собрания по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Восточная, д. № 1 (у секретаря общества) ежедневно в период с 15:00 до 17:00, кроме выходных дней, а в день проведения собрания – в период и по месту его проведения. **Телефон для справок: 62-1-77 или 62-3-47.**

**Совет директоров ЗАО «Моргаушский кирпичный завод»**

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора.**

**Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 10-10.**

* * *

**ООО АП «Соловьевское» приглашает на работу: водителей, механизаторов, доярок, телятниц, пастухов. Зарплата от 15000 руб. Семейным предоставляется квартира со всеми удобствами. Тел.: 8-961-633-01-20, 8-903-848-92-97, 8(83166)37-5-19. 3-5.**

* * *

**Реализуем мордовцемент марки М-400 по цене 180 руб. и М-500 по цене 230 руб., а также пиломатериалы.**

**Тел.: 8-917-667-59-95, 8-960-311-99-71.**

* * *

**Закупаю КРС, бычков, телок на выращивание. Тел.: 8-961-339-39-90.**

* * *

**Декабрь уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-992-35-07.**

* * *

**Декабрь уйăхĕнче пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-990-32-82.**

* * *

**Продается дом в Моргаушском районе в д. Карманкасы с землей. Площадь дома 62 кв. м., 44 сот. земли, газифицированный, асфальт до дома, цена договорная. Тел.: 8-903-065-58-66. Настя. 1-2.**

* * *

**Уйăх çурăри вăкăр сутатпăр.**

**Тел.: 8-937-370-93-15, 8-937-370-26-30.**

* * *

### Постановление главы Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 15 апреля 2013 года № 2 о проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Москакасинского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 29 апреля 2013 года в 15 часов 00 минут в здании администрации Москакасинского сельского поселения, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Москакасы, улица Московская, дом 54 (проект прилагается).

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Сĕнтĕрвăрри ялавĕ».

### Проект муниципального правового акта Об изменении разрешенного использования земельного участка

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:092701:1100 из категории «земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, с «для строительства автозаправочной станции» на «для реконструкции автомобильной дороги М-7 «Волга».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 29.04.2013 года до 15-00 часов.

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Волкова Людмила Александровна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, д. 4. Бычкова Альбина Викторовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, д. 5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:250801:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Максимова Людмила Никитична, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, ул. Комсомольская, д. 9.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:250801:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Александровское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Агапова Алевтина Клементьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Адабай, ул. Солнечная, д. 8.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Чернова Галина Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр-т М. Горького, д. 38/2, кв. 54.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

**Аукцион**

## Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

